## Хӗвел умӗн

Амӑшӗ ывӑлӗнчен ҫапла ыйтрӗ:

— Алюш, сана пӗр класра вӗренекен хӗр ачасенчен хӑшӗ килӗшет?

— Вера.

— Галя кӑмӑла каймасть-и?

— Вӑл лайӑх вӗренет-ха, анчах ялан кивӗ пушмакпа ҫӳрет.

— Ҫавӑншӑн тиркетӗн-и?

— Аха.

— Галя Дмитриева ашшӗсӗр ӳсет. Амӑшне ӑна пӗччен ҫитӗнтерме ҫӑмӑлах мар. Ывӑлӑм, халӗ иксӗмӗр хӗвел ҫине тинкерсе пӑхар-ха, унта мӗн те пулин асӑрхатӑн-и эсӗ?

— Темле пӑнчасем пур.

— Ачам, ҫав тӗксӗм пӑнчӑсене ҫынсем ҫинче сахалтарах асӑрхама пуҫласан эсӗ ҫӗр ҫинче ху та ҫутӑ хӗвел пулатӑн, — терӗ кулкаласа амӑшӗ.

*Федорова, Л. Хӗвел умӗн : [калав] / Л. Федорова // Чӑваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пӑча валли ҫырнӑ хайлавсем. – С. 400.*